„Канаш“ хаҫат ҫумĕнҫе тухаҭ.

# КАПКĂН

8-мĕш №

Апрелшĕн, 1927 ҫ. 3-мĕш ҫул тухаҭ.

## ПĔҪҪЕНЕХ.

Вăрçă пулаҭ тесе, хăш-хăш çамрăкрах комсомолĕссем комсомолтан тухаççĕ.

Çырусенҫен.



**Çекреттар (Колҫтсов сăввине вуласа):**

**Сĕтел хушшине еп ларам та**
**Хуйхăрса, макăрса шутлам:**
**Иепле пурнас ман кунта**
**Пĕҫҫен çамрăк пусăмпа.**

# Мӑнкун.

— Куккукӗ те ҫӑпар—Йӑви мамӑк
Мӗн-ма, куккук!—тесе калас мар...
Хуҫисем те ҫун пек, сӑри пыл пек
Мӗн-ма тӑван тесе калас мар...
тесе шавласа йурлаҫҫӗ Муки Макар пӳртӗнҫе. Кунта пӗтӗм Муки ратни пухӑннӑ. Вайлӑ рет.

— Пулса-а!—тет Муки.—Христосӑн тивлеҫӗ пире те ҫитет...

Курка хыҫҫӑн курка «христос тивлеҫӗ» пыр шӑтӑкӗнҫен хырӑмсене йӑнкӑлтатаҫ.

— Ӗҫӗр, ҫийӗр! Муки таврашӗ наҫар мар вӗт! Тӑвансемпе пуҫтарӑнса ӗҫсе ҫини никама та айӑп тумасҫ...

— Христос та хӑй вилес умӗн тайнӑй веҫҫӗр туса ӗҫсе ҫинӗ те, уншӑн мӗн айӑпӗ пултӑр, тет Муки пиҫҫӗшӗ Сахар.

— Вӑрттӑн каҫ тунӑ пулаҫ ӗнтӗ вӑл, тет Ҫитӑр.

— Есӗ ҫамрӑк-ха, Ҫитӑр... Мӗн пӗлетӗн есӗ?

— Мӗн пӗлесси кирлӗ унта?.. Акӑ манӑн ҫӑвар—варинкке, хырӑм пиҫке... Йар та йар!..

— Ҫӑнах калатӑн, Ҫитӑр... Йар та йар!—тет Макар.

* * *

Муки ратни хӗрсе ҫитрӗ. Сӑрапа ерех хӑйӗн ӗҫне тӑваҫҫех ӗнтӗ. Пурин те шӑнӑрсем ҫемҫелҫӗҫ. Ҫӗлхесем салтӑнса кайрӗҫ. Ларма тӑма пӗлми пулҫӗҫ. Ӗҫеҫҫӗ, шавлаҫҫӗ. Хутран-ситрен хӑскалаканни те пур. Хытӑрах кӑшкӑрса калаҫакансем пулҫӗҫ. Вӗллери хурт пекех сӗрлеҫҫӗ...

— Пӑнттин Пилат пурӑннӑ вӑ-хӑтра-а...

— Сӑрисем те ҫун пек, хуҫи ҫӑпар
Мӗн-ма куккук!—тесе калас мар...
— Ма есӗр мана, ҫӑпар, тетӗр!
— Кам сана ҫӑпар, тет?..

— Е-е! Мана, Муки Макарне, кил хуҫине страштиҫ тума-и?.. Йарӑп, вӑт сӑраллӑ витрепе...

Унҫҫен те пулмасҫ, Ҫитӑр Макара ҫавӑрса та илет. Ҫитӑра Сахар пулӑшаҫ, Сахара—Лавун... Ну, тӳпӗлтеттереҫҫӗ... Кӗрмешнӗ вӑхӑтра, тахӑшӗ сӗтел ҫинҫи ҫетвӗрт кӗленҫине тукмак пек тытаҫ те, тытӑнаҫ кама лекнӗ, ӑна нӳҫлеттерме. Акӑ кӗрмешеҫҫӗ тӑвансем.

—Хура-ах!.. Распуй!..—тенӗ сасӑ урама та тухса кайрӗ... Пурте ҫӗп-ҫӗр йун. Хӗрарӑмсем хӑранипе аҫисене пуҫ-хӗрлӗ тыткаласа урама тухса тарҫӗҫ, шӑй та шай тӑваҫҫӗ.

Ҫапӑҫнӑ сасӑ каҫ пулас умӗн ҫеҫ ҫарӑнҫӗ. Хӑш-пӗрин вӑйӗ пӗтрӗ пулас, хӑшӗн сасси пӗтрӗ. Муки реҫӗ саланҫӗ.

* * *

— Ну, ӗҫнӗ ӗнер! тет Макар.

— Ну, ҫапӑҫрӑмӑр та вӗт, тет Сахар.

— Айта, пҫаваҫ. Мухмӑра ҫасрах уҫас-ха, тет Макар.

Рете пайан Сахар пуҫтарнӑ. Сахарӑн сӑри те лайӑх, сӑмакункки те хайар. Хӑнасем ӗнерхи шута ҫите пуҫларӗҫ. Макарӑн—пулса-а! текен сасси йанӑрма тытӑнҫӗ. Каллех «куккуксене ҫӑпарлатма» тытӑнҫӗҫ. Урамри аҫасем:

—пайан Муки раҫни ҫапӑҫаҫ-ши?—тесе кураcшӑн кӗтсе тӑраҫҫӗ...

— Вӑт, камиҫ, тет пӗри.

— Кун пек камитшӗн 5 пус пама та шалккӑ мар, тет тепри.

— Ернипех капла пулсан ҫпектаккӑҫ пӗр хӗрӗнҫе тӑтӑр.

— Комсомолӗсем ним те тумарӗҫ никак?...

— Авӑ, ӗнер Мукисем ҫапӑҫнине курса тӑҫӗҫ, курмарӑна?..

САТИВАН.

## Ҫӗнӗ мелҫ.

— Аҫа ашшӗ камне мӗнле майпа пӗлме пулаҫ?

— Пӳрне тӑрӑх.

— Мӗнле апла?

— Аҫа амӗш пӳрнипе кам ҫине тӗллесе кӑтартаҫ, аҫа ашшӗ те ҫавах пулаҫ.

## Патрак хисепне кӗресшӗн.

— Ахаҫ ҫухне есӗ аван ҫыратӑн. Ма-ха ретаксийе ҫыру йанӑ ҫухне наҫар алӑпа ҫырса йаратӑн?

— Патрак шутне кӗме. Ҫухӑн, тӗттӗм аҫа, тетҫӗр.

# ÇУРАКИ ÇИТРЁ.

Кивçен панӑ вӑрлӑха пуçтарас ĕçе мĕнле интерессипе çинҫен Çĕрĕç Комиссариаҫĕ йанварĕн 29-мĕшĕнҫе тин тĕплĕн ӑнлантарса панӑ.

„Канашӑн" 53-мĕш №-рĕ.

Вӑрлӑха леçсе парсанах, кайалла илсе килмелле пулаҫ. Хресҫен çырӑвĕсенҫен.



— Ӑçта кайан, хӑта?
— Стантсӑка—вӑрлӑх леçме. Ес тата ӑçтан?
— Еп вӑрлӑх илсе килетĕп.

## „Мӑнкунта йураҫ".

(Мешҫенле çын шухӑшĕ).

Ватӑ çерçийе хӑвӑхпа улталаймӑн тенĕ пек, мана та есĕр мӑнкун каç вуламалли çуртпа, йе театтӑрпа улталаймӑр. Епĕ турра ĕненместĕп. Арӑм умĕнҫех калатӑп: турӑ çук вӑл. Анҫах турӑ çук пулсан та, епĕ ҫиркӳве çӳретĕп... пуççапма мар, латӑн шӑрши шӑршлама. Латӑн шӑрши шӑршламасан тапак шӑрши шӑршламалла-и мĕн ман? Тапак шӑрши сийенлĕ, латӑн шӑрши апла мар... тутлӑ. Çапла ĕнтĕ ман пек ватӑ çерçийе тапак шӑршипе улталама ан та пикенĕр. Улталанас çук.

Йӑвӑççинҫен улми инçех ан ӳктĕр тесе, епĕ хам аҫамсене те латӑн шӑрши шӑршлама вĕрентетĕп. Вĕсем, ман аҫамсем, хам пекех пулҫӑр, мĕншĕн тесен, вĕсене сакс кĕнеки çинҫе ман çийе çырса лартнӑ.

Çăмартасем хĕрететĕп, мĕншĕн тесен епĕ искусства йурататӑп. Хĕрлĕ сӑрпа сӑрласа хĕретнĕ çăмарта вӑл куçпа пӑхма та илемлĕ, çиме те тутлӑ.

Кулиҫсем, пасхӑсем тунӑшӑн та айӑпламалли çук, мĕншĕн тесен вĕсем тутлӑ, çийĕнҫен тата вĕсене тумасан арӑмпа харкашса каймалла пулаҫ. Ара, хам турра ĕненместĕп пулсан та, çак аслӑ мӑнкунта хамӑн майралла тумланнӑ мӑшӑрпа харкашса илес килмест. Кивĕ тĕнҫе тĕп пултӑр! Çĕнелнĕ çын (епĕ) сыв пултӑр! МАМИ.

# Ҫӗнҫӗр вӗрене шӑхлиҫ тыттарҫӗ.

Ҫӗнҫӗр тени пур ҫӗрте те ырӑ пулмасҭ. Кайас ҫӗрти пурнӑҫа лайӑхрах сӑнаса пӑхмасӑр кайма йурамасҭ.

**(Хаҫатсенҫен).**

* * *

Мӗтри Йӑванҫӑ ҫинҫен пӗлес тесессӗн, есӗр Мурсай аҫинҫен ыйтӑр. Вӑл унӑн пурӑнӑҫӗ ҫинҫен мар, сылтӑм ҫӗрни ҫинҫе миҫе шурӑ пуррине те тӗрӗссипе каласа пама пултарать.

Амурски оплӑҫра, Талай йатлӑ йалта пурӑнать ҫав вӑл—Мӗтри Йӑванҫӑ текенни. Унта вӑл пӗр 10—15 ҫ у л ӗлӗкрех кусна, теҫҫӗ ҫалтонсем, анҫах те тӗрӗс вӑл, те тӗрӗс мар, тӗрӗссипе тӗрӗс маррине, тӗрӗссипе каласан, тӗрӗссипе калама пултараймастӑп.

Унӑн ҫаваш хушшине йулнӑ ашшӗ-амӑшсем унтан кашни икӗ ернерех ҫыру илеҫҫӗ. Хӑш-пӗр ҫухне, наукӑпа технӗккӑ пирки, телекрамсем те пыркалаҫҫӗ.

— Ей, манӑн ҫунтан-вартан, пӗтӗм ӳт-пӗверен йуратнӑ хама ҫуратнӑ аттесем!—тет вара вӑл хӑйӗн ҫырӑвӗнҫе.

Сире хисеплесе, ырӑ сунса, сире ватӑлмаллӑх кунсенҫе райри пек пурӑнмалла пултӑр тесе, сире райа каймa мар, хам патӑма ҫӗнетӗп. Епӗ кунта питӗ аван пурӑнатӑп. Манӑн халӗ икӗ хутлӑ ҫурт, пӗр кӗтӳ выҫӑх, виҫӗ лавкка, тата икӗ ҫил арманӗ. Тырӑ пулӑ манӑн питӗ нумай. Тырӑсем те калама ҫук аван пулаҫҫӗ. Ҫӗр-шыв та ҫителӗклӗ кунта. Рапотниксемпе ҫӗмӗрттерсе ахӑрса анҫах пурӑнатӑп, райри пек, тет.

— Мӗнле кунта ҫухне пит кахалҫӗҫке. Мӗнле унта вӑл пит пуйса кайнӑ пулаҭ-ха. Ахӑртнех ӗҫлесе пуйайрас ҫук-ха вӑл та. Ӑҫтан та пулин укҫа кӑлармалли шӑтӑк тупнӑ пуҫ, хӑйамат, теҫҫӗ.

Пурӑнсан-пурӑнсан Мӗтри амӗш ҫӑтаймарӗ:

— Айта-ха, тет, вилиҫҫен кайса курас хамӑрпа хирӗҫсе, харкашса, вӑрҫса кайнӑ Мӗтрийе. Вӑрҫса кайнӑ пулсан та пире манмасҭ тата... Кӑмӑлӗ унӑн ырӑ, хамах хӑвнӑ пулмалла.

— Аҭа, кайсан кайӑпӑр, мӗн пулса—мӗн килӗ, тет ашшӗ те...

Мӗн пур пек пурлӑхне сутаҫҫӗ те, пӗр пин тенке йахӑн укҫа тӑваҫҫӗ те Ҫӗпӗре тухса кайаҫҫӗ.

Ҫитрӗҫ Талай йатлӑ йала, Амур шывӗ оплӑҫне.

— Ӑҫта кунта ман ывӑлӑм, Мӗтри Йӑванҫӑ текенни, тет ашшӗ хӑйӗн шӑрт сухалне каҫӑртса.

— Мӗтри Йӑванҫӑ во-о-он унта... самӑй йал вӗҫӗнҫех ҫӗр ҫавса тунӑ пӳрт, авӑ крышшӑран мӑрйи кӑшт анҫах курӑнаҭ, тет пӗри.

Карҫӑкӗ ӗненесшӗн мар:

— Урӑх йала лекрӗмӗр пуҫ. Ку урӑх Мӗтри пуҫ. Ара пирӗн Мӗтри икӗ хутлӑ ҫурт тесе калаҭҫӗ вӗт-ха...

— Аҭа, еппин, кӗрсе пӑхар-ха, пирӗн Мӗтри пулмасан та.

Кӗреҫҫӗ. Мӗтрипе арӑмӗ иккӗшӗ те кӑмака ҫине улӑхса выртнӑ та, ашшӗсем пырса кӗрсенех, сывӑ ҫӳреттӗри, тесессӗнех иккӗшӗ те мешӗлтетсе сиксе тӑрса ларнӑ.

Хӑйсем ҫыкансем пек хуп-хура, куҫ шуррисем анҫах курӑнаҫҫӗ. Тумтиррисем ҫӗтӗк-ҫатӑк, пӗрех хутҫен ҫултalӑкра та ҫуман пулмалла. Ҫӳҫӗсене те нихӑҫан тураман пулӗ: тӑмаланса пӗтнӗ. Паллашаҫҫӗ.

Ентӗ халӗ килсе кӗнӗ хӑнасене апат лартас пулаҭ, апат ҫитерме ҫӑкри те ҫук. Арӑмӗ хутаҫ ҫакса ҫӑкӑр пуҫтарма кайаҭ.

Ак ку ашшӗпе амӗш пуҫлаҫҫӗ макӑрма. Кӑлараҫҫӗ хӑйсен ҫӑкрисене те, пуҫларӗҫ ҫиме.

Ашшӗ:

— Ех, ывӑлӑм, тет, ма есӗ пире ҫав тери суйса ҫырусем ҫырса ҫӗнсе йарса, пире ват ҫынсене лерен хускатса кӑларса, пире ӗмӗрлӗхе нушана хӑвартӑн, тет.

— Суйман епӗ, тет Мӗтри Йӑванҫи.

— Мӗнле суйман, кулатник пуҫӗ!—тет ашшӗ харкашса ӳксе.—Икӗ хутлӑ ҫурт, виҫӗ лавкка, икӗ ҫил арман, тата пӗр кӗтӳ выҫӑх пур манӑн тесе, йалан пирӗн патра улталаса ҫырусем йарса пурӑнтӑн, тет.

Мӗтрийӗ калаҭ:

— Епӗ те кунта нуща куратӑп, есӗр те курса пӑхӑр-ха. Есӗр мана

# Хваттер ыйтӑвӗ.



**„КАПКӐН“ ХУÇИ: „Крокотил“ тусӑм! Ман кӗнђелер вађђи хваттер пит тӑвӑр. Лайӑхрах хваттер тупма пулӑшмӑнши мана. Шупашкарти пуçлӑхсем хам каланине итлесшӗнех мар!**

**„КРОКОТИЛ“. Иурӗ. Епӗ Шупашкартисене çăтма пит йурататӑп! Ш-ш-ш-ш! Ђш-ш-ш-ш!**

---

ӗлӗк пайтах тарӑхтартӑр, пӗрмайах мана хӗнеттӗрђӗ. Лавккасем тата сире! Есӗр халӗ те лавкка çинђе лараттӑр, вӗт. Акӑ есӗ лараканни пӗрре, ав теприн çинђе анне лараӑ, ак виçӗмӗшӗ çинђе епӗ ларатӑп. Çил арманӗ курас килсессӗн, авӑ пирӗн хапха тӑррипђе авӑрса лараççӗ. Иккӗ-ђӗ те-ха вӗсем, пӗри çилпеле ўкнӗ пуласха. Выђӑх ман ђӑнахах пӗр кӗтў пулнӑ: икӗ çул кӗтўре çўрерӗм. Халӗ те кӗтў хуçи пулмалла та, халӑх мана лайӑх кӗтеймест тесе тытмарӗ-ха, терӗ.

* * *

Ку сӑмахсене илтсе тӑрансан, апшӗпе-амӗшӗ кутамккисене илеççӗ те, хамӑр ӑçтан килнӗ, çав çулпалах кайалла шартлаттарар тесе, çав кунах тухса карӗç киле, Раççейа.

Çын сӑмахӗ вӑл йуплӗ çăмах хыптараӑ çав.

Шилкӑнпа Илсарай.

# Шуйттан.



**АҪИ: Ав, унта шуйттан лараҫ.**
**АШШӖ: Мӗнле? Епӗ шуйттани?**
**АҪИ: Есӗ килте ҫук ҫухне анне сана кирек хӑҫан та шуйттан тет. Шуйттан йатлӑ пулмалла есӗ.**

---

# „Хӗрарӑмсен хушшинҫе те ӗҫлет“.

Пирӗн Талуй йалканаш претҫетаттелӗ хӗрарӑмсем хыҫҫӑн ҫупма йуратаҫ. Упӑшкисене ватса, ҫӗмӗрсе хӑратса ҫӳрет. Павӑл Кӗркури хӑй арӑмӗпе тытпӑ та, претҫетаттелӗ ӑна урине ҫапса хуҫса хӑварнӑ.
АЛТӐР КУҪ.

Пирӗн хӗрарӑмсене совет ӗҫне йертесси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫ. Ҫавӑнпа та хӑш пӗр вырӑнсенҫе ҫав тӗлӗшпе йатарлатсах ӗҫлеҫҫӗ ӗнтӗ. Ҫакна пирӗн Талуй йалканаш претҫетаттелӗ те ӗҫлеме тытӑннӑ. Анҫах унӑн ӗҫӗ пӑртак тӳнтерлерех пыраҫ. Совет ӗҫне вырӑнне—сарай хыҫне пулаҫ. Йатарлатса вырӑнне—йасарлатса пулаҫ. Арӑмсемпе йали кулаҫ, арҫынсене ҫапса хуҫаҫ. Пур ӗҫе те пултараҫ, ҫут тӗнҫене култараҫ.—Ну, инке, ҫунтан йуратап ҫав сана. Хам арӑм пулсан ахаҫ сана, шур тутӑрпа ҫӗркесе, арҫа тӗпнех пуҫтарса хурӑттӑм. Ма хам арӑм марши ес?

— Ара сан арӑму та лайӑхҫке.

Апла капла, вӑт ак капла. Апла марҫӗ, ак ҫаплаҫҫӗ, ик ват йапшар ҫапла йурлаҫҫӗҫ, епӗр те ҫапла йурлари:

Сарай хыҫӗнҫи
Сар ҫӑххи
Кӑтӑкласа кускалаҫ;
Йал варринҫи
Сар аҫа
Инке ҫунне хускатаҫ.

Инке ҫунне мар, Павӑл Кӗркури ҫунне те хускатрӗ. Апла марҫӗ, ак ҫаплаҫҫӗ, епӗ сире ҫапла йурлами:

Хуҫӑм хӗрӗ—
Сарӑ хӗр
Сарай тавра кускалаҫ.
Кускалин те
Кускалатӑр
Хӑй нуштине хӑй кураҫ.

Икӗ хор пӗр ҫӗре пулҫӗҫ. Рекӗнҫӗсем те тупӑнҫӗҫ. Пӗрри асли пулмалла. Мӗн тумаллине тумалла. Кӗҫӗннисене тӳмелле. Ӗнси тирне сӗвмелле. Ҫӳҫ тӑпки те памалла. Урне ҫапса хуҫмалла.

Вӑт, тепе на,
Ех, Улина.

Пирӗн претҫетаттел асли пулҫӗ. Кӗркури урине йуман кӗмӗрттупа тӗк!

# Пӳрократ Макар.

(Йуптару).

Пĕр йалта Макар йатлă кĕтӳçĕ пулнă. Вăл çав йалта тăхăр çул кĕтӳ кĕтсе хăй ĕçне ҫиперех туса пынă: хăй кĕтĕвĕнҫен йута выҫăх тавраш ăсатман, ĕнесене, каҫакасене суса вăрттăн сĕт-турăх туса пурăнман, каҫака сĕҫĕ те суса çимен. Ытти усал кĕтӳçĕсем пек пуласлăн пулман, халăх мĕн панипе кăмăллă пулнă.

Инкек курăнса килмест, теççĕ. Çапла Макар çине те вуннăмĕш çул пĕр инкек кĕтмен çĕртен килсе çакланҫĕ. Пĕрре унăн пит кирлĕ ĕçпе тепĕр йала каймалла пулнă та кайалла таврăнаҫҫен кĕтӳне хăйĕн помошнĕкĕ аллине шанса хăварнă. Çак вăхăтра кĕтӳрен пĕр пӳтек таçта кайса çухалаť. Тем тĕрлĕ шыраť Макар таврăнсассăн çав путеке; çитмен вар, çитмен шырланкă хăвармарĕ, путек тупăнмарĕ, пуçĕпех çухалҫĕ.

Мĕн тăвас? пуçа лаштах усрĕ Макар. Аша пăшăрхавтараť кĕтмен инкек. Иепле тăрас путек хуçин куçĕсем умне? Шухăшлаť тăваť те путек хуçине тархаслама шут тытаť. Кайаť ун патне.

Путек хуçи пит тăнлă çын пулнă иккен. Вăл Макара тĕпҫесе ыйтрĕ те, ăна пĕртте айăпласшăн пулмарĕ.—Ху килте пулман ҫухнехи инкекшĕн, есĕ ответ тытмалла пек туйăнмасť, терĕ путек хуçи.

Тин лăпланаť мĕскĕн Макарăн ҫĕри, анҫах... нумайлăха мар.

Тытăнаççĕ çав вăхăтра ку йалта пӳрократтисăмпа кĕрешес кампанийе ирттерме. Хушаççĕ ку ĕçе тума Иатсăрккапа Лапсăрккана, тата Унтăрккана. Акă тытăнҫĕç кусем пӳрократтисăм шырама. Иалта пĕр пӳрт хăвармарĕç кĕрсе пăхмасăр, хăйсен çурҫĕсем çеç йулҫĕç. Сакайсене те пăхкаларĕç, кăмака хыçĕсене те пăхкаларĕç, пытавнă пӳрократ шыраpĕç, анҫах пĕрне те тупаймарĕç.

— Иепле тупас пĕр пӳрократ та пулсан? Ăна тупмасан çӳлтен пана прикказа пурнăçа кĕртейместпĕр, теççĕ кусем хуйиха ӳксе.

— Тавай айăплас Макара, вăл кĕтӳрен путек çухатнăҫĕ; ăна та пӳрократ тесе шухăшламасан, ăçтан тупăпăр пӳрократ? тет Унтăркка.

Каланă тунă,—ҫĕнтереççĕ сута шеремет Макара.

Тыгăнҫĕç кăна тĕпҫеме.

— Есĕ мĕншĕн пӳтек çухалассине пĕлнĕ пекех йут йала кайнă? тет пĕри.

— Путек çухалассине санăн ҫĕрӳ сиснĕ пулмалла, мĕншĕн есĕ çавăнпа ăна хупа пĕрле илсе каймарăн?—тет тепĕри.

— Мĕншĕн есĕ путексем çухаласран вĕсене амăшĕсен çумне кăкарса хума хушса хăвармарăн помошнĕкне?—тет виççĕмĕш.

Çакăн пек ыйтусемпе Макарăн тăнне кăларса пĕтерсен, йулашкинҫен ăна самай пысăк пӳрократ вырăнне хурса унăн пӳрократтисăмĕ çинҫен таврари йалсене пĕлтермелле турĕç.

Авал пĕр Крыловăн паçнинҫе кашкăр путеке çийесшĕн, ăна: есĕ епĕ ĕçес шыва пăтранҫăклатрăн, тесе хирĕçнĕ путекĕ çырма шывне кашкăрĕнҫен айаларах тăрса ĕçнĕ пулсан та, çавăн пек мĕскĕн Макар та йалта пӳрократ тупăнманнипе, айăпсăрах пӳрократ шутне кĕрсе йулҫĕ.

ХУЛА ÇЫННИ.

---

тĕксе илҫĕ. Мĕн? Кĕмĕрттун çирĕп,—хуçăлмарĕ. Анҫах Кĕркури кукленсе анҫĕ.

— Еп претçетаттĕл! Епĕ пурне те пултарап. Ман хĕрарăм хушшинҫе те ĕçлемелле. Мана никам та ҫарма пултараймасť. Еп хам хуçа. Пурне те тăватăп мĕн килнĕ пуçа.

— Хуçа çав, хуçа! Пурне те пултаран. Арăмпа та ĕçлерĕн, урана та тĕрĕслерĕн. Ех, мăнтарăн!..

Çапла ĕнтĕ пирĕн претçетаттĕл хĕрарăмсен хушшинҫе те арçынсен хушшинҫе те вирлĕ ĕçленине куратпăр. Вăл вирлĕ ĕçлет. Вĕçĕмсĕр ĕçет. Ку ĕçрен ăна уйăрас мар тесен, пĕр çак ĕçе анҫах парас пулаť. Хаҫ вăхăтлăха ĕçе тĕплĕрех вĕренме Йетĕрнене на **«Исправтомские курсы»** йарас пулаť. Вăл ĕçе кĕске вăхăтрах вĕренсе çитмелле мар. Çавăнпа та пĕр 3—4 çуллăхах хăварсан та йураť. Кун çинҫен проккураттурăн халтерех хотатайства кĕртмелле. Çаплан? Ç. ШĂПҪĂК.

# Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ.



## Сасӑсӑр йал.

Нурӑсра (Йетӗрне у.) йал сасси илтӗнми пулнӑ.

Унта Нурӑс вулкомӗпе вулӗҫтӑвком пӗлтӗр кашни икӗ ернерех «Йал сасси» йатлӑ ҫтена хаҫачӗ кӑларса тӑраҫҫӗҫ. Халӗ кӑҫал хӗле кӗнӗренпе «Йал сасси», ҫӑхҫӗппе хурҫӑка тытса кайнӑ пекех ҫухалчӗ, тет «Пиҫен йӗппи».

Ан хӑра, Пиҫен йӗппи. Сирӗн йал сасси каллех илтӗнекен пулнӑ... Мӑнкунта. Унта кӑшкӑрашакансем те, йӗрекенсем те, йурлакансем те пулнӑ.

## Авланас килети?

Хӑш-пӗрисем кушака йатак шутне кӗртсен, кушаксене те 20-шер тытма (усрама) пуҫлӗҫҫӗҫ.

Йӗкӗрварти (Ҫӗрпӳ вул.) Иван Никиттӗн хӑйӗн 15 ҫулхи аҫине, ҫураки умӗн ҫӗр валеҫнӗ ҫухне йатак хушасшӑн авлантарнӑ. Аҫи авланасшӑн мар. Ашшӗ ӑна ал туйипе шыҫса кайаҫҫенех хӗненӗ.

Хӗнесен авланма мар, каҫҫа та кайӑн.

## Алӑ пусма пӗлейменнисем.

Пӑрӑнтӑк вулӑсӗнчен (Пӑва кантонӗ) ҫыраҫҫӗ:

«Пирӗн Такӑварӗнчи 1-мӗш сыпӑклӑ шкулти учителнитсӑ Иҫухина аҫасене пит наҫар вӗрентет. Хресчӗнсем: пирӗн аҫасем алӑ пусма та пӗлмеҫҫӗ, тесе ӳпкелеҫҫӗ» (Урхамах Хветки).

Мӗнле ал пусма пӗлмеҫҫӗ? Ал пусма шкулта вӗренекен аҫасем мар, ҫултальӑкри аҫасем те пӗлеҫҫӗҫке. (Хӑрӑм тӗлне пулсан).

## Пасарсӑр пурӑнайманcем.

Ӗлӗк пӗр кахал ҫын пулнӑ, тет те, ҫав кахал ҫын ернере 7 кун праҫник тунӑ, тет. Ернере 8 кун праҫник тума та хатӗр пулнӑ та вӑл, анчах ерне тенинче 7 кун анчах пулни ӗҫе чарса тӑнӑ.

«Турай вулӑсӗнчи ӗҫлекенсем ернере икӗ кун праҫник тӑваҫҫӗ: пӗрне—йункун, тепӗрне—вырсарни кун. Вырсарни кун—канмалли кун йаҫӗпе, йункун—пасар кун йаҫӗпе», тесе пӗлтерет пире пӗр йалкор.

Апла пулсан сирӗн пасара вырсарни куна куҫарас. Вырсарни куна куҫарсан, вулӗҫтӑвкомри слушӑшчисем те ернере пӗр кун анчах канӗҫ. Куҫарма йӑвӑри мӗн?—пасар сирӗншӗн мар вӗт вӑл,—вулӗҫтӑвкомрисемшӗн.

## Тараса Маҫки.

Учрештенисем тирпейлӗх решимӗ ҫинчен манма пуҫларӗҫ, йалти арман хуҫисем манмаҫҫӗха.

«Майшунчи (Ентриел вул.) Маҫка Унтрианӗн, арман хуҫин, ҫӗнӗ йышши тараса пуканӗсем пур. Пӗр йышшине ҫӗпре амӑшӗнчен (чултан) тунӑ, вӑл сур кӗренкке туртаӑ, тет, тепӗр йышшисем тӑхҫа хуҫӗкӗсем, ыттисем тимӗр татӑкӗсем».

Труках 8 пӑт турттармалла пулсан, 8 пӑтлӑх пукан вырӑнне хӑйне тараса ҫине хӑпартса лартас. 16 пӑт турттармалла пулсан, хӑйӗнпе арӑмне, тата 1 ҫулхи аҫине лартас... Мӗн килокрамсем илсе укҫа пӗтерес!

# Ҫавӑн ҫ̌ухлех кĕл ту.

— Карҫ̌ак!—терĕ Илйе хăй арăмне. —Сĕтел ҫине сармалли сар та, катил ăшне хума кăмрăк туп-ха. Тата сăмавар... ҫ̌асрах!..

Сĕтел патĕнҫ̌е паҫ̌ăшки епитрахилне ҫакма та пуҫланă. Илйе сĕтел патнелле пырса кăсйинҫ̌ен кивелнĕ укҫа хутаҫҫине туртса кăларҫ̌ĕ, унтан виҫ тенкĕлĕх симĕс хут укҫа кăларса илҫ̌ĕ те, ăна сĕтел ҫине парахрĕ.

— Ҫавӑн ҫ̌ухлех кĕл ту...

Хут укҫи вĕрҫĕнскерех, анҫ̌ах, пуҫ̌ă шăтарса пĕтернĕ пек, ҫавракан-ҫавракан шăтса пĕтнĕскер.

Тйаккăнĕ, Илйе ытла уҫă кăмăллинҫ̌ен тĕлĕннипе, укҫана пăхса ҫăварне карса пăрахрĕ. Тĕлĕннипех: а-хăм! тесе илҫ̌ĕ те, аллине укҫа патнелле тăсрĕ. Анҫ̌ах Илйе укҫине ывăҫ лаппипе (тупанĕпе) хупларĕ лартрĕ.

— Кĕл ту малтан.

Паҫ̌ăшкапа тйаккăн пит пысăк шухăша кайнă пек пулса,—мĕнле-мĕнле кĕлĕсем тумаллаши? тесе пĕр-пĕрипе канашлама тыҫанҫ̌ĕҫ. Шыв ҫветит тумалли молепăн тăвас пулаҭ. Вăл пĕр тенкĕ тăраҭ. Тура амăшне ывăл турра аккафĕс кĕллисем тăвасси... пулттинĕкшер. Мĕн пурĕ икĕ тенкĕллĕх. Тата мĕн кĕлли тумалла-ши?

— Арăму мĕн йатлă сан, Илйе? тесе ыйтрĕ тйаккăнĕ.

— Варвари.

— Апла пулсан, Варварă великкомуҫ̌еницăна аккафĕс кĕлли тăвăпăр. Икĕ тенкĕ те ҫурлăх. Аҫу-аннӳсене асăнăпăр, вăл 10 пус.

— Ман йатпа аккафĕс тăвăр! терĕ тата Илйе.

— Ун пек аккафĕс кĕнеки ҫумра ҫук пирĕн. Ҫ̌ăм-ха, акă мĕн тăвăпăр епĕр, Илйе: Илйе вырăвне Микулана аккафĕс вулăпăр, терĕ те тйаккăн, кăшт кулса илҫ̌ĕ.

Пит вăрăм кĕлĕ пуҫланса карĕ.

Пӳрте катил тĕтĕмĕ тула пуҫларĕ. Таҫтан кăмака ҫинҫ̌ен, сывăрмалли сентре (полаҭйа) ҫинҫ̌ен аҫ̌асем упаленсе анҫ̌ĕҫ. Вĕсем ҫăварĕсене карса пăрахса пупсем мĕн туиине пурне те астуса тăраҫҫĕ: паҫ̌ăшки катилпа суллаcа, аккафĕс кĕлли сăмаххисене ҫемҫен каланӑ майăн кăшт тайкаланса илет; тйаккăнĕ тата, сăмси виттĕр урмăш сасăпа йурлаҭ пулин те, сухалне тăратса каҫăркалана тăраҭ.

Кĕл туса пĕтерсессĕн, тйаккăн аллине укҫа выртакан вырăналла ҫ̌ăсса йаҫ̌ĕ. Анҫ̌ах укҫи ҫук.

— Аҫта укҫа?

Илйе кулкаласа пăхаҭ тйаккăн ҫинелле.

— Ҫил вĕҫтерсе карĕ, терĕ вăл— катилпа ытла хытă сулларăр, ҫ̌ӳреҫ̌е виттĕр ак вĕҫсе ӳкрĕ.

Тйаккăн ҫав тери хыт ҫиленсе кайнипе сывлăшне те ҫавăрса илеймест.

— Пар кунта окҫана! тесе тапăнаҭ тйаккăн Илйăна, аккафĕс кĕнекипе хамсăрса.—Ахалех-и мĕн саншăн пур ҫветтуйсене те ҫ̌ăрмантартăмăр. Распуй! тет.

Илйе тĕксĕм сăнлă пулса кайса хăйне кăсйинҫ̌ен ҫапса илҫ̌ĕ.

— Укҫа шанҫ̌аклă вырăнта. Ан шарла. Кунта вăл. Унтан Илйе, ним те пулман пекех, паҫ̌ăшкăсене сĕтел хушшине ҫ̌ĕнҫ̌ĕ.

— Манăн ҫăкăр-тăвартан ан йĕрĕнĕр! терĕ.

Хурланнипе те намăсланипе ним тума пĕлмен Мефоти атте тӳрех, ним шухăшламасăрах сĕтел хушшине кĕрсе ларҫ̌ĕ. Ун хыҫҫăн тйаккăнĕ те ларҫ̌ĕ. Ҫиленипе хăйĕн пиҫ̌ĕ хĕрелсе—кăвакарса кайнă, ҫӳҫĕсем саланса пĕтнĕ. Сĕтел ҫине сăмавар, ерех тухса ларҫ̌ĕ, кишĕр, купăста куклисем тухса вырткрĕҫ. Тйаккăнĕ ҫавăнтах ерехне тултарҫ̌ĕ те, йаклаттарса та йаҫ̌ĕ.

Ҫăмăлланма вăхăт ҫите пуҫланă хитре арăм ҫ̌ей тултарҫ̌ĕ те, хăнасем ҫине вăрттăн кулнă куҫпа пăхса: ĕҫĕр, ĕҫĕр, тет.

— Хаҫ̌хи вăхăтра пур ҫĕрте те ҫынсем пит усалланса карĕҫ, тесе хуҫ̌ĕ Илйе, пĕр ҫ̌еркке ерех ĕҫсе йарсан, хăй ҫамкине пĕрсе лартса, хăнисем ҫине куҫ айăн пăхаҭ.—Ҫын ҫук пулсан, вăл йытăран та кайа. Йытта ытларах хисеплеҫҫĕ, вăл ҫыртаҭ пулсан, унтан хăраҫҫĕ. Ҫук ҫынна пур выҫ̌ăх та сĕкме пăхаҭ, тет.

— Есĕ ăва кам ҫинҫ̌ен калатăн? тесе ҫ̌алăшшăн пăхса илҫ̌ĕ Илйене тйаккăн.

Илйе ăна ҫиллĕн пăхса куҫран тĕллесе лартрĕ.

## Волокиттă. пĕттĕр!

Мăрат вулĕçтăвкомĕ хут çырать:

**Шкул пуçлăхĕсене, вулполитçут претçетаттĕлне—Никколайĕв йул-ша.**

Хисеплĕ йулташсем!

Çутта кăларакан уçрештенисем ĕçлени çинçен сирĕн, кашни уйăх пуçламĕшĕнçех, пĕрĕмĕшпе иккĕмĕш хурăмлă хута тултарса вăхăтра вулĕçтăвкома тăратмалла.

Темиçе те систерсе ыйтнă пулин те хăш-пĕр ĕçлекенсем тунă ĕçсене хисепе илни пит пахине ăнланса çитмен: вăл вулĕçтăвкома, çитменне аслă оркăнсене те план тăрăх ĕçлесе пыма çăрмантарать.

Кун пек йапалана малашне çăтма çук, уншăн каçару та çук: есĕр кайа йулнă халăха малалла туртакансем вĕт! Шкул пуçлăхне М..., вулполитçут пуçлăхне Н... вулĕçтăвком хăтарать; малашне шкулсенçе пикенсех ĕçлекенсем вулĕçтăвком ыйтнине тепĕр хут каласса кĕтмесĕрех тăвасса шанатпăр.

Волокиттă пĕттĕр! Ĕç сывă пултăр.

Мăрат вулĕçтăвком претçетаттĕлĕн çамеçтиттĕлĕ **Апроççимăв.**
Çекреттар **Çеменăв.**

**Капкăнран**: Хм! Кашни уйăхрах икĕ формăпа çветĕнисем парса тăмалла! Волокиттăпа кĕрешеттĕр! Кĕрешĕрех! Пăртакçă тăхтасан волокиттăпа кĕрешекенсемпе хайсемпе кĕрешмелле пулать. Çапма пĕлменĕн туйи хайне çаврăнса тивет, теççĕ.

---

— Çухласа илекенĕ çинçен.

— Есĕ кăçал кавит туни? тесе кăшкăрса пăрахрĕ тйаккăн. — Шухăшсем сан ытла турра хирĕçлескерсем. Тем, тахçантанпа сана епĕ кăçал çиркÿре курман.

— Есĕ ху тата кăçал урă пулнă-и?

— Епĕ-и? терĕ тйаккăн. — Епĕ пу-улнă.

— Пустуйах урă пулнă. Ӳсĕр çухне есĕ таçта лайăхрах! Е—ех, вăрăм тумтир.

**С. Куçĕв—Оренпуркски.**

(«Служи на все» калавĕнçен илсе куçарнă).

## Çын шутне кĕресшĕн



**— Ай, сăранĕ хулăн. Портфĕл кунтан пит селĕм пулать. Такçанах ку йĕнерçĕксенçен портфĕлсем тумалла пулнă.**

---

**Авланма йуратакан Пракахви.**

— Есĕ, Пракахви пиççе, иртнĕ çул Йĕпреçре сйеса пырсан авланнăççĕ. Халĕ санăн ун çухнехи арăму марçке? Ие вилсе кайрĕ-и мĕн, шеремет?

— Çук, вилмен вăл. Епĕ сйес пĕтсенех унтан уйăрăлса ĕлĕкхи арăм патне т а в р ă н т ă м. Манăн пĕрмайах пĕр арăмпа пурăнас йала çук, ăçта кайнă унта авланатăп. Мĕн турттарса çÿремелле хĕрарăма пĕр вырăнтан тепĕр вырăна. Ун пек расхут кăларни тирпейлĕх решимне хирĕç пырать.

Кĕнес.

# Иванпа арӑмӗ уйӑрлаҫҫӗ.

Калав.

Сут шкулта пулаҫ. Унта ҫитмешкӗн вун-вунпилӗк минут кӑна иртрӗ... Курма халӑх ҫылай пуҫтарӑннӑ. Сӗтел хушшинҫе виҫҫӗн лараҫҫӗ. Сутйи—варринҫи пулас—вӑрӑмскер, шурса кайнӑ, ӗххӗм-ӗххӗм ӳсӗрет, кивӗрех паҫттопа. Пӗр хӗрринҫе—йака тумланнӑ пӗр ҫамрӑк аҫа, сарӑ ҫӳҫне ҫӳлелле авӑнтарса кӑтралатса йанӑскер,—комсомол, теҫҫӗ —хӑш ҫынсем ун ҫинҫен. Тепӗр хӗрринҫе—шурӑ тутӑрлӑ, сӑкманлӑ хӗрарӑм,—ах, палламан та,—Сӑпаҫук инке мар-и?—Ҫав, ҫав. Сӑпаҫук инке саҫҫетаттӗлре лараҫ. Мӗн вара, урӑх ҫын тупайман-шим ун вырӑнне,—саҫҫетаттӗле хӗрарӑма лартнӑ. Ку пит тарӑхтараҫ вӗҫӗ ҫӗреллӗ арҫынсене.

— Мӗн пӗлет вӑл хӗрарӑм. Каҫҫа кайма та аҫа тума пӗлет пӗр... тесе тарӑхаҫҫӗ ман хыҫра.

Сутйе сивӗ сассипе:

—Краштӑнсем, шӑп тӑрӑр, тесе ҫараҫ вӗсене.

Сӑпаҫук инке, темшӗн тата, сутйе ҫарнӑ хыҫҫӑнах, тутисене пӗр ҫӗрелле лайӑхрах пӗрсе лартрӗ те, вӑл унӑн пушшех хӑйне хӑй култармалла тухрӗ...

Иванпа арӑмӗ, сӗтел умӗнҫе, иккӗшӗ йунашарах тӑраҫҫӗ. Иван хӑй кӗрӗкпе, пиҫиххипе,—арӑмӗнҫен ҫылай лутра ҫын.

— Мӗншӗн уйӑратӑн-ха арӑмна?

— Епӗ уйӑрмастӑп ӑна...

— Ма суйатӑн ара: ху уйӑратӑн-ҫке мана, тесе витерет ҫинҫе сасӑ.

— Краштӑн сутйе... Калама парӑр йӗркипе. Епӗ унпа ҫиҫӗ ҫул пит лайӑх пурӑннӑҫҫӗ. Апла-капла пӗре те пулман пирӗн. Кӑҫал темскер ӑсран тухса карӗ вӑл.

Хура куҫлӑ, вӑрӑм, виҫкӗн ҫӗлхеллӗ арӑмӗ ҫавӑнтах сӑмахсемпе тӑрӑнтарса илет йӑваш Ивана.

— Ху ӑсран тухнӑ есӗ... Ухмах! тет.

Курма пынӑ халӑх пурте йапӑштӑн кулса йаҫӗ.

Сутйе йӗркипе калама ыйтаҫ.

— Мӗн пулҫӗ апла сирӗн хушӑрта? тет.

Иван тӑрхала пысӑк пуҫне аран тӳрӗ тытса тӑраҫ: акӑ ҫӗрлех ҫакланнӑ мӗн тамӑка. Уйӑрлас ӗҫ капла иккен вӑл. Ну, сут умне тӑма пӗлнӗ-тӗк, калас пулаҫ. Хуҫ... пурне каламасан та, кӗскен те пулсан калас пулаҫ. Атту ӗненмӗҫ тата.

— Епӗ вӑрмана ӗҫлеме кайнӑҫҫӗ, тесе пуҫларӗ Иван мӗскӗн сасӑпа.— Вӑрманта ик ерне пӗр киле таврӑнмасӑр пек ӗҫлерӗм. Ҫав хушӑра ман арӑм килте йӗкӗтсем пуҫтарма тапратнӑ... Пӗрре, ҫапла, киле таврӑнтӑм та, апат пур-и? тесе ыйтрӑм. Вӑл: хатӗрлемешкӗн сан ваҫҫи тарҫӑ ҫук кунта, терӗ. Ӑш ҫуннӑран, епӗ вара кӳрше, Петӗр Иаккӑлҫ куммасем патне кайса лартӑм.

— Кайрӑн ҫав... Есӗ Петӗр Йаккӑлҫ арӑмӗпе пурнатӑн вӗт... Ҫавӑнпа кайнӑ унта. Ахаҫ мӗншӗн кайатӑн?.. Ех, сӑмса айӗнҫи! тесе, упӑшки ҫинелле пуҫне пӑрса илсе, сӑмах хушшинҫех витлесе хураҫ Иван арӑмӗ.

Сутйе ҫӗнӗрен ыйтаҫ.

— Краштанин! Есӗ арӑмна йӗкӗтсемпе тытмарӑн пулӗ-ҫке? тет.

Иван пуҫ тӑррине хыҫса илҫӗ. Ҫӗрене хыт ыраттаракан вырӑн сиксе тухрӗ тинех. Ҫылайҫен ним таврӑрса калама пӗлмерӗ вӑл. Тӳррипе калас— ҫынран намӑс! Ой, мӗн каласа кулмӗҫши кайран?.. сут хыҫҫӑн?—Ҫавӑн пек шухӑш асаплантараҫ Ивана.

Иулашкинҫен:

— Тытрӑм ҫав, тесе йаҫӗ мӗскӗн ҫапах... хуллентерех. Анҫах вӑл хӑйшӗн те сисӗнкӗсӗр тухса карӗ пулас, мӗншӗн тесен, Иван пит-куҫӗ антраса кайнӑ ҫын пит-куҫӗ певех пулса илнине епӗр лайӑхрах куртӑмӑр.

Уйӑрлакан упӑшка хӑй арӑмӗ ҫинҫен тӗлӗнмелле истори каласа паҫӗ. Ана ҫаптарма та аван мар. Анҫах, ҫапах та, вулакансене кӗскен те пулсан пӗлтерес, тетпӗр.

Пӗр тӗттӗм каҫ, арӑмне хураллас шутпа, Иван пӳрт маҫҫи ҫине хӑпарса выртнӑ мӗн (те ҫӑн вара ку, те суйа —сутра хӑй ҫапла каларӗ хӑй, ҫавӑнпа тӗрӗссипе тӗрӗс маршӑн епӗ айаплӑ пуласшӑн мар, суйа пулсан та, кам суйаканех айаплӑ пултӑр ӑна!). Ҫапла хуралласа выртаҫ, выртаҫ, тет,—Иван, —пӗр йӗкӗт кӗрсе кайаҫ, тет, акӑ теппри кӗрет, тет, унтан—виҫҫӗмӗшӗ, унтан—тӑваттӑмӗшӗ,—ух, пӗтӗм пӳрт ӑшӗ йӗкӗтпе тулҫӗ, тет. Унтан та пулмин, Иван арӑмӗ тухтӑр пулма шут тыгрӗ, тет (а Иванӗ маҫҫа ҫинҫе итлесе выр-

таҫ, пӳртре калаҫни-туни хӑлхана пӗтӗмпех кӗрет унне): шурӑ кӗпе тӑхӑнаҫ, тет, тухтӑр пулаканӗ, умне шурӑ саппун ҫакаҫ, алла хӗстермелли-виҫмелли хатӗр пекки илет, ну ку ахаҫ-тен ӗнтӗ... хурӑмшӑн. Хӗрарӑм тухтӑр ҫапла хӑй патне пынӑ арҫын клиентсене пӑхса ҫӳрет: кам стараврах—хӑнана йулаҫ, наҫаррине — шӑпӑрпала...

Сутйе ыйтаҫ:

— Есӗ маҫҫа ҫинҫен йепле курма пултартӑн кӑна? тет.

— Епӗ, кӳрше ҫӗнсе килес тесе, ҫӗрелле анма ура йарса пуснӑҫҫӗ. Пӗри пӳрт алӑкне уҫ йар ҫав вӑхӑтра,—манӑн ирӗксӗрех алӑкпа шалалла ҫапӑнса кӗмелле пулҫӗ...

Хура куҫлӑ арӑмӗ каллех:

— И-и, ҫӑваш, ҫӑсмастни пӑртак?... Сӑмса айӗнҫи! тесе ҫемҫен тӑрӑхласа илет.

Иван ҫӗнмест тек.

Халӑх нимпе те кула-кула йамасӑр ҫӑтса тӑраймасҫ: ҫав тери кулӑшла тухаҫ ку сут. Сӑпаҫук инкен те тутисем ирӗккӗнтерех сарӑлса кайма пӑхаҫҫӗ, анҫах хуҫи ҫасах тытса ҫараҫ вӗсене, —йурамасҫ,—вӑл саҫҫетаттӗл вӗт,—саҫҫетаттӗле кулни килӗшмест. Саҫҫетаттӗлсен... сутйесен хайсене хӑйсем тытма пӗлмелле. Сӑпаҫук инке тин вӗренет хаҫ. Ҫавӑнпа унтан нумай ыйтмалла мар. Ан тив... малтан кӑна вӑл, темскер вӑтанас килнипе, тутасем пӗрӗнеҫҫӗ, кайран вӗсем хӑйсемех ирӗкленеҫҫӗ.

— Килӗшместӗр-и вара? тесе ыйтаҫ сутйе.

— Ӑҫтан килӗштерен унпа, таса ҫынна ахаҫ ҫӗртенех варлаканскерпе... Вӑл мана ик уйӑх ытла ӗнтӗ хӑваласа йани. Пӗр-ик хутҫен хӗнерӗ. Ҫвитетлӗсем пӗлеҫҫӗ. Тытнӑ тесе суйеҫтерҫӗ, хӑҫан тытнӑ вӑл мана?

— Тытнӑ ҫав.

— Тытман... И-и, йытӑ пӑх!

— Ну, ҫитӗ, ҫарӑнӑр... Хӑваласа кӑларнӑ, хӗненӗ пирки ҫвитетлӗсем пур-и сан, краштанккӑ?

— Пур.

— Ман та пур, тет Иван, тӑрук хӑйулланса кайса.—Епӗ сана алӑпа тӗкӗнмен, тет.

— Тӗкӗнмен-и?.. Тен есӗ ман ҫумма та пыман пулӗ?

— !..

Халӑх ахӑлтатса кулаҫ. Иванпа арӑмӗ ҫаплах урлӑ сӑмахсемпе перкелешсе

## Ситти.

Ула куракӑн йурри йалан пӗр тӗрлӗ
Тенӗ сӑмах йевӗрлӗ
Пирӗн Ситтин те (епир ӑна кӗркунне
Суйларӑмӑр потрепиттӗл лавккине).
Ӑҫта ҫитнӗ унта пӗр сӑмах:
— Ех, тур! тет вӑл,--шӑшисем ӗрҫеҫҫӗ,
Лавкари тавара касса-ҫисе ҫӗтеҫҫӗ,
Тесе ҫӳрет вӑл йаланах.
Шӑши тенин ӗнтӗ ҫӑнах та
Хӗрхенӳ-мӗнӳ ҫук никҫан та:
Таварӗ йӳнӗрехх пулаҫп,
Ие хаклинех кураҫп—
Вӑл пурне те кӑшлама пӑхаҫ.
Пирӗн Ситти те пысӑк арҫине
Хаклӑ йышши таварсем пухаҫ?
Ӑҫтан илетши-ха вӑл вӗсене?
Кам пӗлет.
Пирӗн халӑх шӑшисенҫен тӗлӗнет,
Пурте шӑлӗсене
Шӑшисем ҫине хӑйраҫҫӗ,
Пӗтермелле! Пӗтермелле вӗсене!
Тесе пирӗн йалсем ҫуйахаҫҫӗ.
Капкӑнсем илме те хатӗр хӑйсем.

* * *

Ҫук! Кирлӗ мара шавлатӑр, йулташсем:
Шӑшисем ҫинҫе арманӗ аваҫаҫ,
Таварӑра лавккӑртан Ситтийех
шутараҫ.
Н. Пев-в.

---

илеҫҫӗ...—Ҫпектаккӑҫ пек ку!.. Интереснӑ.

Сут, ҫвитетлӗсем ҫӗнмелле, тепӗр вӑхӑта хӑвармалла турӗ.

Иванпа арӑмӗ алӑк патнелле хуллен утса карӗҫ: Иванӗ малтан, арӑмӗ хыҫалтан пыраҫ,—ахӑр, ҫапах уйӑрлас килмест-тӑр пӗр-пӗринҫен. Иван, ыттисене сут тунине итлемешкӗн, сут умнелле ҫавӑрӑнса тӑҫӗ. Арӑмӗ те йунашарах ҫавӑрӑнса тӑҫӗ. Хура куҫӗсем йалтӑртатаҫҫӗ ҫеҫ. Иванӑн апла мар: ун кӑшт тӗксӗмрех те, хӑй пекех, йӑваш куҫӗсем,—ҫӳлелле пӑхаймаҫҫӗ, ҫӗрелле ытларах пӑхаҫҫӗ.

Тепӗр ернеренех:

— Иванпа арӑмӗ пӗрлешнӗ, терӗҫ йал ҫыннисем.

— Ну-у-и, пӗрлешнӗ-и?

— Пӗрлешнӗ.

ХУММА ҪЕМӖНӖ.

# Мӑнкунта ҫуп туса ҫӳрени.

(Кивӗ йӑла)



— «Христос воскрес» тума Иӑван матки патне кай. Унпа варлӑ пурӑнатӑн есӗ.



— Христос воскрес, Иӑван матки!
— Ман хырӑмра та тепӗр 6 уйӑх-ран «воскрес» пулат̆. Алимент хатӗрле.



— Хӗлӗп ывӑлсам (ули), Христос воскрес!
— Воскрес-и? йурӗ. Ҫуп тумасан та йурӗ.



— Христос воскрес, хуҫам!
— Воскресне «воскрес» та-ха, кӳр сӑмсуна ҫыртса татса илем! тӳс! Христос тӳсме хушнӑ.

# Хуликансемпе кӗрешме суйларӗҫ.

Хуликансемпе кӗрешес ӗҫ наҫартарах пырать.
Хӑш-пӗр ҫухне пӗр-пӗр тӑнлӑ ҫынах хуликансемпе кӗрешес вырӑнне хӑй хуликанла ӗҫсем тӑвать.
(Хаҫатсенҫен).

Епӗ халиҫҫен йал пуххине тухман. Пӗре тухрӑм, унта та пулин хуликансемпе кӗрешме суйларӗҫ пире Ваҫкапа иксӗмӗре. Халӑхран ыйтатӑп: пушалстӑ, ман вӑй ҫук, тип ҫӑкӑрпах пурнатӑп, тетӗп. Халӑх, вӑл Митукпа, Ваҫки лайӑх ҫынсем хуликанпа кӗрешме пултараҫҫӗ, тесе пирех суйласа хуҫӗ.

Мӗн тӑвас—Ваҫкӑна ҫӗнтӗм те, айтаха тесе, тула илсе тухрӑм.—Ну суйларӗҫ. Иксӗмӗр те вӑйсӑрсем. Мӗнле кӗрешӗпӗр, текелесе калаҫкаласа тӑратпӑр. Ыран курса калаҫӑпӑр терӗм те, килелле утрӑм. Киле пырсанах арӑма тӑратса кам сысна ашӗ сутаҫшн, тесе ыйтатӑп. Ман арӑм: Мӗн тӑван сысна ашӗпе, терӗ. Пире хуликансемпе кӗрешме суйларӗҫ, тесе хутӑм арӑма. Есӗ ӑҫтан кӗрешӗн, пӗркун кӗлетрен пӗрпӑт ыраш аран йатса килтӗн те, мӑнттай ҫынсемпе ӑҫтан кӗрешӗн, тесе ман арӑм макӑрашма тапратрӗ.

Неҫу, терӗм те арӑмран тавайха пӗр пулштух ҫуттине тесе ыйтрӑм та, пулштух ерех йатса тухса карӑм. Йалканаш патне ҫитсе кӗретӗп, ыйтатӑп: пӗре тунӑ йапалана улӑштармастпӑр, теҫҫӗ. Ним тумалли те ҫук, тула тухрӑм та йатӑм хайхи пулштух ҫуттине.

Ним пӗлми пулса кайнӑ, таҫта тӗлӗкре пек. Ты сам хуликан, тесе кӑшкӑраҫҫӗ ман хӑлхаран. Ҫӗр каҫрӑм. Ир тӑратӑп та, епӗ хурал пӳртӗнҫе пӗҫенех. Ма хупнӑ кунта тесе, алӑк патне пытӑм, питӗрнӗ, кантӑка ҫапса ҫӗмӗртӗм те, урампа пыратӑп. Хыҫран пырса та тытрӗҫ: стой хуликан теҫҫӗ. Тытаканне ҫавӑрса илтӗм те ҫӗпҫӗр йун турӑм ҫынна. Унҫен те пулмарӗ, улттӑн ҫитҫҫӗн пырса ҫарҫӗҫ те: есӗ йалканаш претҫетаттӗлӗн кантӑкӗсене нимӗн те хӑвармарӑн, ӗнер сана хуликанпа кӗрешме суйланӑ та есӗ ху хуликан терӗҫ Ыран пулать, пайан пулать, мана йалканаш претҫетаттӗлӗ сута панӑ. 15 тенкӗ шыраҫҫӗ, тата хуликанла ӗҫ тунӑшӑн айӑплаҫҫӗ. 15 тенкине ултӑ мӑшӑр кантӑк ҫӗмӗрнӗшӗн тесе ҫырнӑ.

Сута пырсе те ҫитрӗмӗр. 6 уйӑх хупмалла турӗҫ, ҫийӗнҫен 15 тенкӗ тӳлемелле турӗҫ. Унҫен те пулмарӗ леш, епӗ кӗрешнӗ „хуликанӗ“ те ман ҫинҫенех сута елеклесе кӑтартнӑ. Уншӑн та 6 уйӑх лартмалла турӗҫ, пӗтӗмпе 1 ҫул та, 15 тенкӗ ларҫӗ епӗ хуликансемпе кӗрешме кӗни.

Покровски.

# Алимент.

«У-у-у-у-у-у-у-у
Пӗҫӗкскерне
Папуҫҫине
Па-аппа у-у-у»

Марина аппа аҫа ҫуратнӑ,
Анҫах ашшӗн йатне ҫухатнӑ;
Мӗн йатлӑҫҫӗ-ха ку аҫа ашшӗ?
Ах, тур таташшӗ.
Мантӑм хӑйамат.
Есӗ мари,—Йӑкӑнат?!

— Пӗр ҫул пурӑнсахи,
Мӗн ес ухмахи?
Парӑп еп сана ашшӗ,
Ак ҫӗр ҫӑтасшӗ!

— Пӗр пӗрре,
Ик ике,
Виҫ виҫе,
Тӑват тӑпаҫ,
Пилӗк пилеш,
Улт улми,
Ҫиҫ улми,
Сакӑр салми,
Тӑхӑр тӑрни,
Вӑсми так—
Ашшӗ ак:
Клемент,
Тӳлле алимент!

Вӑт тепе рас,
Мӗншӗн ман парас?
Ашшӗ еп мар,
Ман йухман тар.

Тӳле, тӳле
Вӑрӑм ан пуппе.
Хысахви курнӑ:
Ашшӗ ес пулнӑ!

Уа-уа-уа-уа!
У-у-у-у-у-у-у-у-у-у!

Ҫ. ШӐПҪАК.

# Хĕллехи кампани мĕнле иртнĕ.



Кăçал хĕлле сăра ĕçес кампани аван иртрĕ. Ав, пиђĕкесене Атăл хĕррине кăларса хунă. Пурте пушă, сăрисем хырăмсем витĕр йухса тухнă. Ытти кампанисем мĕнле иртнĕ-ши?

---

## Пуçа килнĕ шухăшсем.

Мăнкунта вăрçаççĕ, Труйскире пĕрле ĕçеççĕ, çуллахи туй вăхăтĕнђе тÿпелешеççĕ, автан йашккине пĕрле çийеççĕ, сурхурире вăрçсан сута параççĕ, çăварнире каллех вăрçаççĕ—волокиттă пулаĭ-и ку?

———

Халĕ, сиессем иртнĕ хыççăн, çулталăк хушши пĕр канмасăр çыратпăр ĕнтĕ; тепĕр çулталăкран мĕн ђухлĕ хут çырни çинђен каллех отђот тумалла пулаĭ.

———

Уђрештенисенђе ăратлă сыснасем нумай та, анђах вĕсенђен пихăшне те йалхуçайстви выстăвккине илсе каймаççĕ.

———

«Хĕрлĕ автанпа» кĕрешес ĕç пирĕн аван пыраĭ: «хĕрлĕ автан»вађђи аласемпех шыв йăтатпăр.

———

Ватă шухăшлă çамрăк хĕрсем пулмасан растраттăсем те сахалах пулмалла.

———

Тĕнђере ђи йунĕ йапала вăл—тĕрмене лекнĕ растратђăк.

———

Хырăм вăрăм, вăл анкеттă мар, ăна ђасах тултараймăн.

## Сĕнтĕр—Вăрринђи каласусем.

— Мĕн вăл машинисткă?

— Машинисткă—кăнтăр ăпатĕнђе выђамалли пукане.

— Ийуђ уйăхĕ мĕнпе ђаплă?

— Апортсемпе ђаплă. Шупашкар укомĕнђи хĕрарăм пайĕнђе ĕçлекен халапĕсем тăрăх ийуђ уйăхĕнђе апортсем тутарма пынă хĕрарăмсем йышланмалла.

— Çулталăкĕпе кам курортра пурăнаĭ?

— Сĕнтĕр-Вăринђи «Трудовые будни» йатлă çтена хаçаđĕ. Çулталăк хушшинђе вăл виçĕ нумĕр тухрĕ.

— Кăçал Атăл шывĕ мĕнле пулĕши?

— Сĕнтĕр-Вăрринђен пуçласа тăвалла пысăк пулмалла пек, мĕншĕн тесен, Сĕнтĕр-Вăрринђе урам сарма туртарса хунă хăйăрсем çурхи шывпа йухса, Сĕнтĕр-Вăрри тĕлĕнђе Атăла пĕвесе лартассăн туйанаĭ.

— Иурпа тăранма пулаĭши?

— Пулаĭ пек туйăнаĭ. Сĕнтĕр-Вăрринђи Шелеском рапођисене ĕçленĕ укçисене тÿлемесĕр хăшкăлтараĭ.

Рапођисем: мĕнпе тăранса пурнас, тесессĕн, «йурпала» тесе ответ параĭ. Иур ирĕлсе пĕтсен мĕнпе тăранĕç-ши рапођисем? А?

— Мĕн вăл РКИ?

— РКИ—вăл пукан çинђи шĕвĕр пăта. Вăл пÿрократсене тÿлек ларма памасĭ.

ВĔРКĔЂ

# Ҟуç хыçĕнҭе.



Хăш-хăш парттийтсăсемпе комсомолĕссен сĕтелĕсем çинҭе мăнкун ҭух çăра уççи шăтăкĕ виттĕр пăхсан, ак мĕскер курăнҭĕ.

Ответ. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 1730 Чебоксары, тип. „Чувашская книга".